Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчеле тухать

56 (7373) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи июлĕн (утă) 8-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ыран – Раççей почта кунĕ

**ПОЧТА ÇЫХĂНĂВĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

**Сире професси уявĕпе – Раççей почта кунĕ ячĕпе саламлатăп!**

Почта çыхăнăвĕн пĕлтерĕшĕ тĕнчере халĕ анлăрах та анлăрах. Почта паян – çырусемпе телеграммăсем, переводсемпе посылкăсем кăна мар. XXI ĕмĕрти информаци технологийĕсемпе усă курни ăна пурнăçлакан ĕçсен анлăшне ӳстерме майсем туса пачĕ, кашни çын умĕнче вĕççĕр майсем уçрĕ.

Çавна палăртма кăмăллă. Чăваш Республикинчи почта отраслĕ пур çĕнĕлĕхсене те çул пама тăршать, Раççей почтин нумай ĕмĕрсем хушши пыракан традицийĕсемпе юлашки вăхăтри техника çитĕнĕвĕсене тачă çыхăнтарса пырать. Почта службин сотрудникĕсем хăйсен ĕçне-хĕлне вĕçĕм çĕнетме тăрăшаççĕ, ума лартнă задачăсене татса пама çĕнĕ майсем шыраççĕ, республикăн экономикăпа социаллă аталанăвĕн ӳсĕмĕсене хăйсен тӳпине хываççĕ.

Чăваш Республикин Правительствипе «Раççей почти» пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси пирки тунă Килĕшӳ усăллă хутшăнусен результачĕ пулса тăрать. Ăна пурнăçа кĕртни аякри ялсенче пурăнакансене почта çыхăнăвĕпе туллинрех тивĕçтерме, социаллă тата мал пĕлтерĕшлĕ почта услугисене аталантарма май парĕ.

Шанса тăратăп: сирĕн профессионализм, ĕçе юратни, шанса панă ĕçшĕн хăвăртан мĕн килнине пĕтĕмпех тума хатĕр пулни малашне те республикăри почта çыхăнăвĕн тухăçлă ĕçĕнче тивĕçлĕ вырăн тупĕç.

Кулленхи ответлă ĕçшĕн тав тăватăп, сире тата сирĕн çывăх çыннăрсене ырă сывлăх, ĕçре ӳсĕмсем, телей тата ăнăçусем сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

**ПОЧТА ÇЫХĂНĂВĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

**Сире професси уявĕпе – Раççей почтин кунĕ ячĕпе саламлатăп!**

Раççей почтин пуçламăшĕ 1 Петĕр патша ячĕпе çыхăннă. Унтанпа çĕршывра тĕрлĕ улшăнусем пулчĕç, почта çыхăнăвĕн пĕлтерĕшĕ вара куллен ӳссех пырать.

Сирĕн пархатарлă ĕçĕр районăн экономикипе социаллă аталанăвĕ çине анлă витĕм кӳрет. Пысăк профессионализмлă, шанса панă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлакан специалистсем экономикăн пур сферисене те тикĕс аталанса пыма пулăшаççĕ. Куллен çĕнĕ технологисем пурнăça кĕртсе пынипе эсир халăха паракан пулăшусен шучĕ те, пахалăхĕ те ӳссех пырать. Çанталăк условийĕсене пăхмасăрах эсир пĕлтерĕшлĕ информацие кирлĕ çĕре вăхăтра çитеретĕр. Çавăнпа халăхра яланах хисепре.

Йывăрлăхсене пăхмасăр умри тĕллевсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пынăшăн пурне те тав тăватăп, малашне те çапла пуласса шанса тăратăп.

Çĕнĕ çитĕнӳсемпе ӳсĕмсем, çирĕп сывлăх, телей сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ.**



*Сăн ӳкерчĕкре эсир Муркаш почтамтĕнче вăй хуракан Наташа Германовапа Наташа Бирюкова операторсене куратăр. Çамрăксем ĕçре тăрăшуллă, хăйсен ăсталăхне ӳстерсе пыраççĕ. Кунта килекен клиентсем те вĕсен ĕçĕпе кăмăллă.*

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Симĕс ĕç çи

### Ĕçсем сарăлаççĕ

Ĕнерхи кун тĕлне хуçалăхсенче нумай çул ӳсекен курăксене 5740 гектар (52 процент) çулнă. ЗАО «Агро-Урожай» çак ĕçе вĕçленĕ. «Восток», «Ударник», Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче те ку ĕç вĕçленсе пырать. Çав вăхăтрах «Колос» хуçалăхра курăксен 8 процентне кăна çулнă.

Утă 3350 тонна хатĕрленĕ, плана 26 процент тултарнă. К. Иванов яч. хис., «Передовик» хуçалăхсенче ку ĕç вăрах пырать.

Сенаж 8414 тонна (33 процент) хывса хăварнă. «Ударник» хуçалăхра ку енĕпе плана 83 процент тултарнă пулсан, 6 хуçалăхра ку ĕçе тытăнман та.

## Вырма умĕн

### Юсавлă техникăпа кăна

***Халĕ ответлă тапхăр пырать – вырьăх апачĕ хатĕрлес ĕçсем анлă сарăлнă. Вырмана тухиччен те шутлă кунсем юлаççĕ. Çавна май ĕç çире мĕнле техникăпа усă курасси, унăн юсавлăхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавна май район хаçачĕн тĕп редакторĕн çумĕ В. ШАПОШНИКОВ Чăваш Республикин хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти тĕрлĕ йышши машинăсене тĕрĕслесе тăракан патшалăх инспекцийĕн районти техника тĕрĕслевĕн инспекцийĕн пуçлăхĕпе С. НИКОЛАЕВПА тĕл пулса ку тĕлĕшпе районта лару-тăру мĕнле пулнин ыйтăвне уçăмлатса пама ыйтнă.***

– Çавна каласа хăвармалла. Ял хуçалăхĕнче усă куракан хăй тĕллĕн çӳрекен техника хатĕрĕсене, вĕсен прицепĕсене техосмотр тăратасси пирки РФ Правительствин 2002 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнчи 117-мĕш № йышăнăвĕ, Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин кăçалхи февралĕн 14-мĕшĕнчи 21 № приказĕ вăйра. Районта та ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕпе килĕшсе республикăри Гостехнадзор пуçлăхĕ В.П. Димитриев ял хуçалăх предприятийĕсенчи, шкулсенчи, предприятисемпе организацисенчи тата уйрăм граждансен харпăрлăхĕнчи ял хуçалăх техникине техосмотр тăратмалли графика çирĕплетнĕ.

Техника тĕрĕслевĕ обязательнăй йĕркепе çуллен пулса пымалла. Вăл кашни çулах февралĕн 1-мĕшĕнче тытăнать те августăн 31-мĕшĕнче вĕçленет. Агропромышленность комплексне кĕрекен ял хуçалăх предприятийĕсенче вара техосмотр графикпа февралĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса июнĕн 30-мĕшĕччен пымалла.

Кунта çакна та палăртса хăвармалла. Ял хуçалăх ĕçĕсенче сезонсенче усă куракан техника та пур. Сăмахран, вырьăх апачĕ хатĕрленĕ чухне усă куракансем, вырмара усă куракансем т. ыт. те. Кун пек техникăна кашни тĕслĕ ĕçсем пуçăниччен 15 кунран кая юлмасăр техосмотр тăратмалла.

(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).

## Раççейре

### 1 тонна тулă – 3100 тенкĕ

Юн кун Раççей ял хуçалăх министрĕ Алексей Гордеев çĕнĕ тырăн патшалăх туянмалли хакне пĕлтернĕ. Европа регионĕнчи хуçалăхсене виççĕмĕш класлă 1 тонна тулăшăн 3100 тенкĕ, Çĕпĕртисене 3300 тенкĕ тӳлеççĕ. Сутуилĕве правительство август уйăхĕнчех ирттерме палăртать.

Краснодар крайĕнче вырма пуçланнă ĕнтĕ. Тулă гектартан 43 центнер тухать, пĕлтĕрхинчен 3 центнер сахалрах.

Ял хуçалăх министерстви кăçал çĕршывĕпе 70-73 миллион тонна тыр-пул пуçтарса кĕртме палăртать.

Çитес çултан тырă пуссисене çĕнĕ йĕркепе страхлаççĕ. Пысăк компанисене аккредитаци йĕркипе çак ĕçе тума шанаççĕ.

## Республикăра

### Суйлав – октябрĕн 8-мĕшĕнче

Ытлари кун Правительство çурчĕн Пысăк залĕнче Чăваш Республикин виççĕмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ 33-мĕш сессийĕ ĕçлерĕ. Унăн ĕçне Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Сергей Гапликов, Чăваш Республикин Президенчĕн Патшалăх Канашĕнчи представителĕ, Президент Администрацийĕн Ертӳçи Энвер Аблякимов, федерацин Чăваш Енри тĕп инспекторĕ Руслан Тихонов, Правительство членĕсем, хула-район пуçлăхĕсем, общество представителĕсем хутшăнчĕç.

Парламентарисем Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн тăваттăмĕш суйлаври депутачĕсене суйламалли куна палăртрĕç. Ăна кăçалхи **юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче** ирттерме палăртнă. Депутатсем Чăваш Республикин "Чăваш Республикин "Чăваш Республикин референдумĕ çинчен саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен" саккун проекчĕпе Чăваш Республикин "Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавĕ çинчен" саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен саккун проектне иккĕмĕш вулавпа йышăнчĕç. Çавăн пекех сессире Чăваш Республикин "Муниципалитет харпăрлăхĕнчи пурлăха муниципалитет районĕсемпе тăрăхĕсен хушшинче пайласси çинчен" саккун проектне тата ытти ыйтăва пăхса тухрĕç.

## Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн

### Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн пуçлăхĕн июлĕн 3-мĕшĕнчи 179№ йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе ял хуçалăх отраслĕнче нумай çул ăнăçлă вăй хунăшăн "Передовик" хуçалăхăн тĕп бухгалтерне **Раиса Михайловна КАРПОВАНА** наградăланă.

**"АЗАМАТ" СОЕДИНЯЕТ ДРУЗЕЙ**

"Азамат" - радуга – это символ удачи и добрых вестей. И такой приятной новостью для тысяч жителей Чувашии уже стал тарифный план "Азамат" от компании СМАРТС. А тем, кто хочет общаться больше и при этом экономить, СМАРТС открывает еще один секрет: "Азамат" - не просто удобный и недорогой тарифный план. Главное, что теперь Вы сами можете сделать его еще дешевле!

Подключите услугу "Друзья" на тарифном плане "Азамат" и общайтесь внутри сети СМАРТС неограниченно! Не надо больше думать о бегущих минутах: и 10, и 50, и 100 звонков любой продолжительности благодаря услуге "Друзья" будут стоить всего 5 руб. в сутки. Таким образом, чем больше Вы пользуетесь мобильным телефоном, тем ощутимее окажется экономия.

Услуга "Друзья" доступна именно в то время, когда это Вам необходимо. Другие операторы сотовой связи предлагают безлимитные звонки в определенные дни или часы (в выходные, ночью и т.п.). С услугой "Друзья" не Ваш оператор, а Вы сами выбираете удобное время для общения. Вы можете заказать услугу "Друзья" или отказаться от нее в любой день месяца и сколько угодно раз, потому что подключение и отключение услуги производится бесплатно.

Как же стать счастливым обладателем услуги "Друзья"? Наберите на Вашем мобильном телефоне комбинацию *103#441#, нажмите кнопку "Вызов" - и Ваши "Друзья" уже на связи! Вы можете так же легко отключиться от этой услуги, если вдруг в Вашем общении наступило временное затишье. Но компания СМАРТС искренне желает Вам, чтобы этого не случилось и у Вас всегда находились приятные темы для разговоров с друзьями и близкими.

Услуга "Друзья" на тарифном плане "Азамат" - отличный повод для общения!

Подключиться к СМАРТС в Моргаушском районе можно в салоне связи по адресу: с.Б.Сундырь, ул.Ленина, 19 (маг. "Елена").

Лицензия № 9156 ГК РФ по связи и информатизации.

СМАРТС

Лицензия №9156 ГК РФ по связи и информатизации

## Йыхрав

### Черетлĕ лару

Депутатсен районти Пухăвĕн июлĕн 6-мĕшĕнчи 10 № йышăнăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн вырăна тухса ирттерекен черетлĕ 10-мĕш ларăвне 2006 çулхи июнĕн 13-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕр райповĕн ларусен залĕнче пухма йышăннă. Вăл 10 сехетре пуçланать. Ларура пăхса тухма çак ыйтусене сĕннĕ:

1. 16 № пĕр мандатлă Очăкасси суйлав округĕпе депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутатне суйлама хушма суйлав ирттересси çинчен.
2. Депутатсен районти Пухăвĕн 2005 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнчи С-4/2 № «Муркаш районĕн 2006 çулхи бюджечĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.
3. «Муркаш районĕнчи вакцинопрофилактика» программа çинчен.
4. «Муркаш районĕн культури: 2006 – 2010 çулсем» районăн тĕллевлĕ программи çинчен.
5. Муркаш районĕнчи муниципаллă предприятисемпе учрежденисен услугисен тарифĕсене çирĕплетесси пирки йышăну тăвассин йĕрки çинчен.
6. Çĕр участокĕсене арендăна парассин йĕрки çинчен.
7. Муркаш район территорийĕнче граждансемпе юридици вăйĕнчи çынсене строительствăпа çыхăннă тĕллевпе çĕр участокĕсем уйăрса памалли положени çинчен.
8. Муркаш район территорийĕнче граждансемпе юридици вăйĕнчи çынсене строительствăпа çыхăнман тĕллевпе çĕр участокĕсем уйăрса памалли положени çинчен.
9. Районти промышленность, продукци тирпейлекен тата ĕçре пулăшакан предприятисен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен.
10. Муркаш районĕнче пурăнакансем хушшинче культурăна, спорта, туризма тата сывă пурнăç йĕркине аталантарас тĕлĕшпе 2003 – 2006 çулсем валли йышăннă районти тĕллевлĕ программăна мĕнле пурнăçлани çинчен.
11. Кафе «Пельмени» муниципаллă унитарлă предприятие приватизацилемелли условисем çинчен.
12. «Нива» ял хуçалăх производство кооперативĕн инженери инфраструктурин объекчĕсене Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхне илесси çинчен.
13. Депутатсен районти Пухăвĕн 2004 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕнчи С-26/5 № «Муркаш районĕнче граждансене çĕр участокĕсем уйăрса памалли нормăсем çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвне район администрацийĕн управлени тата пай пуçлăхĕсене те чĕнеççĕ.

## Юбилей

### Саламлатпăр



Çаранçырми ялĕнче пурăнакан хаклăран та хаклă çыннăмăра **Елена Ивановна ПЕТРОВАНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чунчĕререн пуç тайса, хисеплесе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Эпир сана чун-чĕререн юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Утас кун-çулу такăр, ĕмĕрӳ вăрăм, сывлăху çирĕп, пурнăçу тулăх пултăр.

**Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, ывăлĕ, кинĕсем, мăнукĕсем, ашшĕпе-амăшĕ, хăти-тăхлачисем, çывăх тăванĕсем, кӳршисем.**

---

Кашмашра пурăнакан **Игорь МАЙКОВА** çитсе килекен çуралнă кунĕ ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Утас çулу такăр, сывлăху çирĕп, кун-çулу вăрăм пултăр.

**Тус-юлташĕсем.**